# Народное представительство

# и

# ОСНОВНЫЯ ПРАВА ГРАЖДАНЪ.

На чувашскомъ языкѣ.

**ИЗДАНІЕ**

*Зиновія Михайловича Таланцева.*

КАЗАНЬ.
Центральная Типографія.
1906 г.

# Халăх хушшинҫен суйланнă ҫынсемпе, халăха мĕнле ирĕклĕхсем, тата ытти кирлĕ йапаласем ҫинҫен.

Кашни халăхăн хăйĕн законĕсем, патшаран тухнă йĕркесем пур, кашни ҫынăн ҫав йĕркесем тăрăх, вĕсенҫен пĕр тухмасăр пурăнмалла. Законсем кирлĕ, вĕсемсĕр пурăнма пулмасҭ, мĕншĕн тесен законсем пулмасан кашни ҫын хăй тĕллĕн, мĕн тăвас килнĕ ҫавна туса пурăнĕ-ҫҫĕ, вăйлăраххисем вăйсăррисене пусмăрлĕҫҫĕҫ. Анҫах законсем пур халăхăн та пĕр пек мар: хăшин авантарах, хăшин наҫартарах. Ăслăрах, нумайтарах вĕреннĕ халăхăн законĕсем те тĕрĕсрех, авантарах, мĕншĕн тесен вĕреннĕ халăх законсене йе хăй, йе хăй хушшинҫен суйланă ҫынсем урлă тăваҭ.

Хăш патшалăхсенҫе законсене патша хăй тĕллĕн анҫах мар, халăхпа пĕрле канаш туса тин кăлараҭ; ҫавăн пек патшалăхсене *ограниченная*, йе *конституціонная монархія* теҫҫĕ. Тата хăш патшалăхсенҫе патшалăх ĕҫĕсене халăх хăй пĕр-пĕринпе канашласа, йе хăй хушшинҫен суйланă тивĕҫлĕ ҫынсем урлă туса тăраҭ: ҫавăн пек, ĕҫсене халăх хăй туса тăракан, патшалăхсене *республика* (халăх ушкăнĕ) теҫҫĕ. Америкари патшалăхсем пурте республикасем. Европара респуб-

ликасем: Франція, Швейцарія, Сан-Марино, тата Германіяра республика манерлĕ «вольные» ирĕккĕн пурăнакан тийекен хуласем пур. Вăл хуласем: Гамбург, Любек, Бремен.

Ытти Европари патшалăхсем Турціяран пуçне пурте конституціонная монархіясем.

Конституціонная монархіясенҫе пур çĕрте те законсене патпа халăх хушшинҫен суйланă çынсемпе пĕрле кăларать.

Конституціонная монархіяра патшан, вăл хăш ĕçсене халăхпа пĕрле тăвать пулсан та, çавах ирĕкĕ аслă. Ун ирĕкĕпе пулакан ĕçсем: вăл министрсене, аслă çынсене лартма пултарать, вăрçă вăхăтĕнҫе çар пуçлăхĕ пулма, ытти патшалăхсемпе ĕç тума, вăрçă пуçлама, вăрçа ҫарма, айăпланнă çынсен айăпне каçарма, йе пăртак çемçетме пултарать; халăх хушшинҫен суйланă çынсене ҫĕнсе пуçтарма, салатма пултарать; халăх суйланă çынсенĕн тунă ĕçне йышăнма, йе йышăнма май пулмасан вăл ĕç çинҫен çĕнĕрен канашлама хушма пултарать. Вăл никама та пăхăнмасть, ăна никам та тивме, айăплама пултараймасть. Патпара ларнăшăн вăл шалу илсе тăрать. Англія патши çулталăкне 5 милліон тенке йахăн, Пруссія, Италія патшисем çиҫшер милліон тенке йахăн илеççĕ. Патшалăх мĕн ҫухлĕ пĕҫĕккĕ, унти патшасем çавăн ҫухлĕ шалу сахал илеççĕ.

Республикасенҫе патша çук, унта патша вырăнҫе халăх суйланă çын ларать, ăна *президент* (малта тăракан, пуç) теççĕ; хăш ҫухне президентсене губернаторсем теççĕ (Америкара уйрăм штатсенҫе, кĕпĕрне пек патшалăхсенҫе, çавăн пек калаççĕ). Швейцарія республикинҫе тата президент çук. Президентлă уш-

кăнсенҫе те хăшинҫе президент ирĕкĕ аслă, анҫах патшанăн пекех мар, мĕншĕн тесен республикара халăх ирĕкĕ те аслă. Францiя республикинҫи президент ирĕкĕсем ак çаксем: вăл халăхран ыйтса законсем кăларма пултарать, айăпланнă çыннăн айăпне касарма, салтаксене, çарсене хăй аллинҫе тытма пултарать, чиновниксене, шалу илекен улпутсене суйлама пултарать, сенат, йе верхняя палата ирĕк парсан, нижняя палатари çынсене салатма, палатана хунă вăхăтран кайарах пухăнма хушма пултарать, палата пĕр-пĕр закон кăлармалла тунă пулсан, палатана вăл закон çинҫен тата тепĕр хут канашлама хушма, йут патшалăхсемпе суту-илӳ тăвас ĕçрен пуçне урăх ĕçсем тума пултарать. Америкари Соединенные Штатыри президент ирĕкĕсем те çаксем пекрехех.

Халăх хушшинҫен суйланă çынсем хăш патшалăхра пĕр çĕре, пĕр ушкăна—палатана пуçтарăнаççĕ, хăш патшалăхра икĕ çĕрлĕ—икĕ палатана пуçтарăнаççĕ. Грецiяра, Болгарiяра, тата хăш-хăш патшалăхсенҫе пуçтарăнакан палата пĕрех; кун пек пĕрерли сахал çĕрте вăл; пуринҫен ытла патшалăхсенҫен икшер палата пулать: пĕри-верхняя, тепĕри-нижняя. Хăш-ҫух икĕ палатинҫе те халăх хушшинҫен суйланнă çынсем пулаççĕ; анҫах ҫас ҫасах верхняя палатара халăх суйланă çынсем мар, урăххисем пулаççĕ.

*Верхняя палатана* ак мĕнле-мĕнле çынсем пуçтарăнаççĕ: патша, йе король хурăнташĕсем, патша умĕнҫе тăракан аслă, ҫаплă улпутсем, нумай çĕрлĕ, нумай пурлăхлă пуйансем, патша йуратакан аслă архiерейсем; хăш ҫухне çак çынсемпе пĕрле хуласенҫен, университетсенҫен суйласа йанă çынсем пулаççĕ.

*Нижняя палатана* халăх хушшинҫен суйланă çынсем пуçтарăнаççĕ. Хăш-хăш патшалăхсенҫе: Герма-

ніяра, Франціяра, Швейцаріяра ҫынсем суйланнӑ ҫӗрте патшалӑхри пӗтӗм халӑх-пуйанни те, ҭухӑнни те пулма пултарать. Урӑх патшалӑхсенҭе нумай ҫӗрте ун пек мар Англіяра, йе Австріяра ҫынсем суйланнӑ ҫӗрте пуйантараххисем, ҫителӗхлӗх пурлӑх пуррисем анҭах пулма пултараҫҫӗ; тата ҫын мӗн ҭухлӗ пуйан, ҫавӑн ҭухлӗ унӑн суйланнӑ ҫӗрте ирӗк пысӑкрах: ҭухӑнтараххи пӗр сӑмах калан ҫӗре пуйантараххи икӗ сӑмах, тата пуйантараххи виҫӗ, тӑватӑ сӑмах калама ирӗклӗ (ҭухӑнтараххине пӗр ҫын шутне, пуйантараххине виҫӗ, тӑватӑ ҫын шутне шутлаҫҫӗ). Хӗр-арӑмсем, Америкари хӑшхӑш пӗҭӗк патшалӑхрисенҭен пуҫне (Колорадопа Вашингтон пуҫне), ытти ҫӗрте ниҫта та ҫынсем суйланӑ ҫӗрте пулма пултараймаҫҫӗ. Пур ҫӗрте те суйлакансем те, суйламаллисем те 21 ҫултан кӗҫӗн мар, вӑтӑртан аслӑ мар пулмалла, тӗрӗс, сутра пулман ҫынсем пулмалла. Тата хӑш-хӑш ҫынсем суйланӑ ҫӗрте те пулма пултараймаҫҫӗ, вӗсене хӑйсене те суйламаҫҫӗ; вӑл ҫынсем: салтак службинҭе тӑракансем, тӗрлӗ полиція тавраш, хӑш ҭухне пуп таврашсем, шалу илекен чиновниксене те суйламаҫҫӗ.

Мӗншӗн законсем кӑларнӑ ҭух икӗ палатара канашлаҫҫӗ? Мӗншӗн тесен «пӗр ӑс аван та, икӗ ӑс тата авантарах», теҫҫӗ.

*Халӑх хушшинҭен ҫынсем суйлас ҭухне* патшалӑха ҭас-ҭасах: миҫе ҫын (вӑл ҫынсене вырӑсла «представители народа» теҫҫӗ), миҫе представитель суйламалла, ҫавӑн ҭухлӗ пайа-округа уйӑраҫҫӗ, вара кашни округра халӑх пӗр представитель суйлать. Пысӑкрах хуласем хӑйсемех икшер—виҫшер округа уйӑрлаҫҫӗ, хӑйсенҭенех икшер-виҫшер представитель суйлаҫҫӗ. Хӑш-хӑш ҭухне суйлас ирӗке палатасен аллине

(Австріяра), университетсен аллине (Англіяра) параççӗ. Сайра хутра тата представительсене кӗпӗрни-кӗпӗрнипе суйламалла тăваççӗ; вара кашни кӗпӗрнерен тӳрех миçе представитель кирлӗ, çавăн ҫухлӗ суйлаççӗ; суйланă вăхăтра кашни суйлаканăн, кӗпӗрнери миçе представитель кирлӗ, çавăн ҫухлӗ çыншăн сасă (йат) памалла.

Суйлакансем йе тӳрех представительсене суйлаççӗ, йе малтан авантарах суйлакан çынсене суйлаçç , вара çак суйланă çынсем тин хăйсем хушшинҫен представительсене суйланине—*прямые выборы* теççӗ, малтан аван çынсем суйласа унтан тин представительсене суйламаллине—*косвенные выборы* теççӗ. «Косвенные выборы» тийекеннисем сахалтарах çӗрте; ун пек: хăш-хăш Германія патшалăхӗсенҫе, Австро-Венгріяра, Норвегіяра анҫах суйлаççӗ.

Суйланă çӗре пур çын та йерме пултаракан патшалăхсенҫе суйлас ӗçре пурне те, пуйанни те, ҫухăнни те пӗр пек ирӗклӗ, пурте сăмах калама, кам кама суйлас тет, çавăншăн *сасă пама пултарайˇ*. Суйлас ӗçре ирӗк пурлăхран, пуйăнлăхран килнӗ патшалăхсенҫе ун пек мар, çынсен ирӗкӗ те пӗр пек мар: кам пуйантарах унăн ирӗкӗ те пысăкрах, кам ҫухăнтарах, унăн ирӗкӗ те сахалтарах. Пӗр пуйан çынах, унăн пурлăхӗсем темиçе округра пулсан, çав округсенҫе пур çӗрте те суйланă çӗрте пулма пултарайˇ.

Суйлас йӗрке икӗ тӗрлӗ пулма пултарайˇ. Пӗри: суйланă çӗрте суйлама пултаракан çын хăй кама суйлама шухăшланине тӳрех каласа кăтартайˇ, вăл йӗркене вырăсла *открытая подача голосов* теççӗ. Тата тепӗр тӗрлӗ: кашни суйлакан çын хăй кама суйлас тет, çавăн йатне шар çине, йе хут татăкӗ çине çырайˇ те суйламалли йешҫӗке хурайˇ; çавăн

пек çĕрте вара суйлакансенҫен нихăшĕ те кам кама суйланине пĕлмеççĕ; ку йĕркене вырăсла *тайная подача голосов* теççĕ (йата пытарса çырни.) Пур çĕрте те пекех çак кайран каланă йĕркепе суйлаççĕ, мĕншĕн тесен ун пек ĕç тĕрĕсрех пулаť: кашни çын, уншăн кам пуринҫен тивĕçлĕрех пек туйăнаť, çавна суйлаť.

Представительсене (темиçе çуллăха) виçшер, пиллĕкшер, çиҫшер çула суйлаççĕ; палатана канашламă пуçтарăннă çĕрте вĕсем пур те сăмах калама пултараççĕ, нихăшне те ҫару çук, палата хăйĕнҫен пуçне никама та пăхăнмасť. Хăш хăш патшалăхсенҫе представительсем шалу илсе тăраççĕ: Пруссіяра кашни кунне çиҫĕ тенкĕ. Францiяра çулталăкне 4000 тенке йахăн илсе тăраççĕ. Англiяра представительсене пĕр пус та çук, мĕншĕн тесен унта пуйансене анҫах суйлаççĕ.

Верхняя палатара та, нижняя палатара та ĕçсем çинҫен канашлама, законсем кăларма пĕр вăхăтра пуçтарăнаççĕ: патша икĕ палатине те кашни çул пĕр вăхăтра ҫĕнсе пуçтараť, пĕр вăхăтрах салатаť. Ĕçсене ушкăнпа тăваççĕ, пĕр-пĕр ĕçре ăна пĕрисем пĕр майлă, тепĕрисем тепĕр майлă тăвасшăн пулсан, хăш йенҫе çын нумайтарах, çавсен майлă тăваççĕ; законсем кăларнă ҫухне малтан нижняя палатара ĕçлеççĕ, унтан вăл тунă закона верхняя палатана пăхма йараççĕ. Нижняя палатара тунă закона верхняя палата йышăнаť пулсан, вăл закона патша патне алă пусма йараççĕ. Республикасенҫе президент палатасем тунă закона йышăнмасăр пултараймасť, вăл йепле пулсан та закон çине алă пусаť; конституцiонная монархiясенҫе апла мар: унта патша палатасем тунă закона йышăнмалла пулсан йышăнаť, йышăнмалла мар пулсан йышăнмасť, çапла закон тухасси тухас марри патшаран килет. Пĕр

Норвегiяра (конституцiон. мон.) анҫах апла мар: унта закон кăларас ĕҫре королĕн ирĕкĕ президентăннĕ пекех пĕҫĕккĕ.

Законсем кăларас ĕҫе министрсем те, представительсем те хăйсем тĕллĕнех пуҫлама пултараҫҫĕ Палатасенҫи ҫынсем, министрсем пĕр-пĕр ĕҫе вĕсем тăвас тенĕ пек туман пулсан вĕсенҫен ĕҫе мĕншĕн ҫавăн пек тунă, кун пек туман тесе ыйтма пултараҫҫĕ, министрсем ĕҫе мĕншĕн ҫавăн пек тунине каламасăр пултараймаҫҫĕ. Министрсем капни палатарах, представительсем пĕрле ĕҫ ҫинҫен канашланă ҫĕрте пулма пултараҫҫĕ, хăйсенҫен сăмах хушма та пултараҫҫĕ.

*Верхняяпа нижняя палатасенҫе законсем ҫинҫен канашлаҫҫĕ*—ҫĕнĕ законсем кăлараҫҫĕ, хăш кив законсене пăрахăҫа кăлараҫҫĕ, йе пăртак улăштараҫҫĕ, тата ҫав палатасенҫех ҫулталăкра хыснана мĕн ҫухлĕ укҫа пуҫтараннине ҫулталăкра патшалăх мĕн ҫухлĕ укҫа пĕтернине ҫырса пыраҫҫĕ; тата кам мĕн ҫухлĕ хыснана налог укҫи тÿлемеллине, патшалăхăн мĕн-мĕн валли, укҫа кивҫен илмеллине, хăш-хăш патшалăхсемпе сутуилÿ тумаллине ҫырса пыраҫҫĕ. Вăрҫă кăларас, вăрҫа ҫарас ĕҫ пĕр патшаран анҫах килет пулсан та, патша ҫапах вăл ĕҫе представительсемпе канашламасăр тума пултараймасть, мĕншĕн тесен вăрҫма укҫа кирлĕ, хысна укҫине ăҫта мĕн ҫухлĕ пĕтересси представительсенҫен килет; ҫапла представительсемсĕр, вăрҫма укҫа ҫитеймест пек туйăнать пулсан, патша вăрҫă та тапратма пултараймасть. Хăш ҫух правительствон патшалăх кăхăтлăха законсем тăрăх тумалла мар ĕеркесенех кăҫармалла пулать: патшалăх пурлăхне пĕр-пĕр аллине памалла, ей пĕр пĕр ҫын пурлăхне, ыттисене аван пултăр тесе хыснана пуҫтарса илмелле, пĕр-пĕр ҫĕрте

халăх пăлханаҫ пулсан, унта салтаксем тăратмалла, йе урăх ҫавăн пек йĕркесем кăлармалла пулаҫ. Ҫаксене пурне те правительство представительсемпе (халăхран суйланă ҫынсемпе) канашламасăр тума пултарайма сҫ; хăш ҫĕрте (Германіяра) вăл ĕҫсем патша ирĕкĕнҫен килеҫҫĕ пулсан та вăл, представительсемпе канашламасăр тума пултараймасҫ. Патша пĕр-пĕр законсем тăрăх тума йурайман йĕрке кăлараҫ пулсан та, никам умĕнҫе те айăплă мар мĕншĕн тесен ăна никам та тивме пултараймасҫ; ун вырăнне патша кăларнă кашни йĕркешĕн министрсене сăмах лекет, айăплă пулас пулсан та министрсем айăплă пулаҫҫĕ. Ҫавăнпа пур ҫĕрте те ак ҫапла йĕрке тунă: патшаран мĕнле те пулсан ҫĕнĕ йĕрке тухсан, вăл йĕрке хăш, министр ĕҫĕ ҫине кĕрет, ҫав министрăн вăл йĕрке ҫине алă пусмалла. Республикасенҫе президентсене мĕнле те пулсан усал ĕҫ тунăшăн айăплама пултараҫҫĕ пулсан та, ҫав министрсем алă пусас йĕрке ҫаплах пур. Пур аван патшалăхсенҫе ытла *халăха нумайтарах ирĕк парасси* ҫинҫен тăрăшаҫҫĕ. Аван патшалăхсенҫе йури ăрасна законсем кăлараҫҫĕ: вăл законсем тăрăх никам та никам ирĕкне хĕсĕрлеме, никам та никама пусмăрласа усал тума пултараймасҫ. Аван патшалăхсенҫе *халăха ирĕклĕрех пурăнтарасси, никам та никама хĕсĕрлемелле мар тăвасси*—пуринҫен паха (кирлĕ) ĕҫ.

Законсем ҫынна нумайтарах ирĕк паҫҫăр, кашни ҫынна никам усал тăвасран хăрамасăр ирĕклĕ пурăнмалла туҫҫăр, пĕр пĕрне пусмăрласа усал тăвасран сыхласа тăҫҫăр. Ҫавăн пек законсене анҫах аван теме йураҫ. Ҫынăн аван пурăнасси ăна мĕн ҫухлĕ ирĕк панинҫен нумай килет, тата мĕн ҫухлĕ лăпкă никам усал тăвассинҫен хăрамасăр ĕҫлесе пурăнма пултарнинҫен нумай килет.

Хӗвел анӑç йенҫи Европара, Америкара пурӑнакан халӑхсем-французсем, нимӗçсем, англичансем, шведсем, итальянсем, тата ытти хӑш хӑш халӑхсем ҫавӑн пек тусан аваннине тахҫанах сӑнанӑ. Вӗсем тахҫанах ҫынна ирӗк паракан, ҫын ирӗкне сыхлакан, пӗр пӗрне хӗсӗрлеме, усал тума ҫаракан, ҫынна кансӗрлемесӗр кашнине харпӑр хӑй шухӑшланӑ пек ирӗклӗ пурӑнмалла тӑвакан законсем кӑларнӑ.

Ҫынна ирӗк парсан, ӑна никам та хӑй тӗллӗн, хӑй шухӑшӗпе анҫах тытса ҫарма, йе тытса тӗрмене лартма пултараймасӑ; тата вӑл анҫах та мар; ирӗклӗ ҫын, хӑйшӗн мӗнле ӗç усӑллӑрах пек туйӑнать, ҫав ӗçе туса пурӑнма пултарать, ӑна никам та ҫараймасть. Вӑл ҫынсене инкек туман, ҫынсене ирӗклӗ пурӑнма кансӗрлемен ӗçсене пурне те туса тӑма пултарать.

Ҫынсене пӗр пӗрне пусмӑрламалла мар тусан, никам та никама хӑй тӗллӗн суранлама, инкек тума пултараймасть. Пӗр пӗрне пусмӑрламалла мар тусан полиція та хӑй тӗллӗн кирлӗ мар вӑхӑтра хӗç-пӑшалпа ӗçлеме пултараймасть, ҫынсене йе хӑйне вилӗмрен хӑтармалла ҫӗрте анҫах хӗç-пӑшал таврашпе ӗçлеме пултарать. Пур патшалӑхсенҫе те пӗр-пӗр ҫӗрте халӑх пӑлханма тапратсан, пӑлханакан ҫӗре салтаксене ҫӗнсе пуçтараççӗ, анҫах унта та пӗр хунӑ йӗркерен тухма йурамасть: пӑлханакан халӑх ҫине тӳрех пӑшалсемпе пеме йурамасть, малтан халӑха виçӗ хутҫен: пӑлханма ҫарӑнӑр, ҫарӑнмасан пӑшалсемпе перетпӗр, тесе каламалла; ҫапла виçӗ хут каласан та ҫарӑнмасан тин пеме йурать. Ҫак йӗркене туса тӑман салтаксен пуçлӑхӗсем сут умӗнҫе айӑплӑ пулаççӗ.

Халӑх пӑлханни нумай вырӑнсене сарӑлса ҫитсен, вӑл вырӑнсене йе хытӑрах сыхламалла тӑваççӗ, йе

вăрçă вăхăтĕнҫи пек çар тăратаççĕ; ун ҫухне вара вăхăтлăха çынна ирĕк паракан, пĕр пĕрне пусмăрлама ҫаракан законсен вăйĕ пĕтет; халăх пăлханнă вăхăтра хăш-хăш патшалăхсенҫе—Франціяра, Германіяра, закон тăрăх сут тăвас ĕçе, халăха пăхăнтарса усрас ĕçе салтак пуçлăхĕсен аллине параççĕ. Англіяра вăл ĕççене ахаҫ, ĕлĕк туса тăнă çынсен аллинҫех хăвараççĕ. Фанціяра, йе Англіяра пĕр пĕр вырăна хытă сыхламалла, йе вăрçă ҫухнехл пек çар тăратмалла пулсан, малтан правительство представительсемпе канашлаĭ, унтан тин, представительсем ирĕк парсан, çĕнĕ закон кăларса çав вырăна çар тăратмалла тăваĭ. Германіяра вăл ĕçе император хăй ирĕкĕпех тума пултараĭ. Англіяпа Франціяра çар хăш вырăна тăратмаллине пит тĕрĕс кăтартса хураççĕ, хăш вăхăтҫен тăратмаллине те малтанах канашласа хураççĕ. Вăл вăхăт иртнĕ çĕре халăх пăлхавĕ ҫарăнмасан, правительство представительсенҫен ыйтаĭ те, вĕсем ирĕк парсан анҫах çарра тата малалла тăратма пултараĭ.

Çынна ним айăпсăрах ҫарса тăратни, тĕрмене лартни çине тĕрĕссипе пăхас пулсан вăл ĕç çыншăн пит хĕн, пит нумай асап кӳме пултараĭ, мĕншĕн тесен тĕрмене лартнă çыннăн пĕтĕм ирĕкĕ çухалаĭ, унăн тăвас тенĕ ĕçĕ тумасăр йулаĭ. Çавăнпа та Европари, Америкари халăхсем закона урлă никама та ҫарса тăратмалла, тĕрмене лартмалла ан пултăр, тесе пит тăрăшаççĕ.

Полицейскійсен хăш ҫухне çапах та айăп тума хатĕрленекен çынсене тытса тĕрмене лартмалла пулаĭ. Полиціяна çавăн пек çынсене ҫарса тăратма ирĕк кирлĕ; полиціяна çавăн пек ирĕк памасан çынсене лайăх пурăнма та май пулмĕ-ҫҫĕ, мĕншĕн тесен пирĕн

хушшăмăрта йалан айăп тума хатĕр çӳрекен çынсем те нумай.

Анҫах полицiянăн айăпла, хăрушă çынсене тытнă çĕрте айăпсăр, лăпкă пурăнакансен çумне сĕртĕнмелле мар. Полицiя хăш ҫухне пĕлмен пирки, йăнăшма пултарат, тата хăш ҫухне, хăйне панă ирĕкпе ним айăпсăр, йе никамшăн хăрушă мар çынсене тытса усал тума пултарат. Ун пек ҫух вăл закона хирĕç тăват.

Йут патшалăхсенҫе çавăн пек закона урлă çынна тытса ҫармалла ан пултăр тесе тăрăшаççĕ. Ун пек патшалăхсенҫе ак çапла законсем кăларнă: полицiя пĕр-пĕр çынна тытса тĕрмене лартсан та, ăна унта нумайҫҫен усрамалла мар, хăвăртрах вăл айăпла-айăпсăр маррине пĕлсе ăна сут умне тăратмалла, тата полицiянăн çынна тытнă çĕрте те закон тăрăх хунă йĕркерен тухмалла мар. Çапла Пруссiяра, тата хăш-хăш патшалăхсенҫе тĕрмене лартнă çынна сут тăватҫен 24 сехетрен ытла тытмалла мар тунă. Англiяра çавăн пек законсем тухни ĕнтĕ çиҫĕ çĕр çула йахăн та пулат; вăл законсем тăрăх çынна тĕрмене лартнă хыççăнах хăвăртрах сут тумалла, айăпсăр пулсан хăвăртрах ирĕке кăлармалла; çаксене туса тăман чиновник таврашсене хăйсене йе укçа тӳлетермелле, йе вырăнтан кăларса йамалла тăваççĕ.

Кам хăй тĕллĕн, законсем çинҫе каланисене пăхмасăр, пĕр-пĕр çынна ирĕксĕр ăçта та пулсан каймалла тăват, йе ирĕксĕр пĕр-пĕр ĕç тутарат, йе закон тăрăх тума йуракан ĕçе тума ҫарат, йе ăçта та пулсан кайма кансĕрлет, йе ирĕксĕр урăх вырăна куçарат, вăл çав çын ирĕкне кансĕрлет. Çапла тăвакан ахалҫ çын та, вырăнта пурăнакан çын та çав ĕçсене тусассăн сут умĕнҫе, законсем умĕнҫе айăплă пулса тăрат.

Ирĕклĕ çынна, вăл нимĕн айăп та тумасӑ пулсан никам та хĕсĕрлеме пултараймасӑ.

Халăх ирĕклĕ пултăр тесен вăл пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçса çӳреме те ирĕклĕ пултăр, паспортсем, кайма ирĕк паракан хут таврашĕсем тутарса çӳремелле ан пултăр. Халĕ, хĕвел анăç йенӡи Европари патшалăхсенӡе, законсем тăрăх, кирек кам та ним паспортсăрах, ирĕк паракан хут тутармасăрах пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçма пултарать. Кашни çын хăй аллинӡе мĕнле те пулин, ун çинӡен пĕлтерекен хут-документ пур пулсан, çав документпа анӡах çӳрет, кирлĕ вăхăтра та çав документа анӡах кăтартать. Хăшхăш патшалăхсенӡе (Германіяра) пит темĕскерле вăхăтсенӡе: вăрçă-мĕн тухсан, халăх пăлханнă вăхăтсенӡе анӡах халăха паспортсемсĕр пуçне çӳретмелле мар тăваççĕ. Куçса çӳреме ирĕк пани ĕçлекен çынсемшĕн пит паха, мĕншĕн тесен вара кашни çын хăйне ăçта усăллăрах пек туйăнать, çавăнта кайса ĕçлеме пултарать. Куçса çӳреме ирĕк пани халăхшăн вĕренес тĕлĕшрен те пит аван, мĕншĕн тесен вара кашни çын ăçта майлăрах пек туйăнать, çавăнта кайса вĕренме пултарать.

Халăх вĕренесси вырăнтан вырăна ирĕк çӳренинӡен те килет те, анӡах тата ытларах *сăмах калама ирĕк панинӡен* килет: халăх пăртак шухăшлама вĕрентĕр тесен кашни çынна хăй мĕн шухăшланине, пĕр пĕр йапалана йепле шухăшласа йепле ăнланнине сăмахпа, йе çыру тăрăх калама ирĕк пултăр, тĕрлĕ кĕнекесем, хаçетсем çине çынсен тĕрлĕ шухăшĕсем çинӡен çырма ӡару ан пултăр. Пуринӡен ытла *кĕнекесем ӳкерме (çырма) çаптарма ирĕк пани* пит кирлĕ. Кĕнекесем çаптарма ирĕк пултăр, кĕнекесем çине никампăн та усал мар шухăшсене пурне те çырма ӡару

ан пултăр, усал йапаласем çинҫен çыракан сут умĕнҫе хăйне хăй çăлтăр. Çапла аван патшалăхсенҫе халĕ нисçта та кĕнекесем çырнă хыççăн вăл кĕнекесене пăхма цензурана (çырнине тиркекен çĕре) памаççĕ. Вĕсен цензура çук, ун вырăнне кĕнеке çыракан çын сут умĕнҫе хăй çырнишĕн хăй сăмах парать. Вăл патшалăхсенҫе кĕнекесем, журналсем, ернере, уйăхра кĕнекенĕн тухакан хаçетсем кăларма никамран та ирĕк илмелле мар, анҫах кашни кĕнеке çыраканăн хăй кĕнеки çине хăй йатне çырмалла, ăçта, хăш хулара, мĕнле типографіяра çапнине кăтартмалла, урăх нимĕн те кирлĕ мар. Çавăн пек патшалăхсенҫе цензурана пĕтернĕ хыççăн халăх вĕренес тĕлешрен пит хавасланса малалла кайа пуçланă. Халĕ хĕвел анăç йенҫи Европара, Америкара йалсенҫе пурăнакан халăхсем те, хуласенҫи пекех, кĕнекесем, тĕрлĕ журналсем, хаçетсем вулаççĕ. Журналсем, хаçетсем вуланă тăрăх унти халăхсем патшалăх ĕçкисене аван пĕлекен пулаççĕ, законсем кăларакан палатасенҫе пухăсенҫе мĕн ĕçленисене ҫас пĕлсе çитеççĕ, правительство, ҫаплă çынсем мĕнле хăтланнисене кураççĕ. Çаксене халăха пурне те пĕлме, пур çынна хута вĕрентмелле туни те, школа йĕркисене аванлатни те нумай пулăшать.

Кĕнекесем çырма, çаптарма ирĕк панă патшалăхра мĕн шухăшланине *ахаҫ сăмахпа калама та ирĕк* парас пулать. Сăмахпа калама ирĕк пани пуринҫен ытла шлоласенҫе, вĕрентнĕ çĕрте кирлĕ. Кашни вĕрентекен хăйĕн вĕренекенĕсене хăй шухăшĕсене, хăй мĕн пĕлнисене калама ирĕклĕ пулмалла, кашни вĕрентекенĕн хăй вĕренекенĕсене тĕрлĕ ĕçсем, тĕрлĕ йапаласем çинҫен тĕрĕссипе вĕрентмелле. Çавăнпа школасенҫе вĕрентек

ĕçре нимĕн те ҫару ан пултăр, ниăçтан ан хĕсĕрленҫ-ҫĕр, полиція тавраше ан кансĕрлетĕр. Патшалăхăн школасенҫе пĕр-пĕр усал ĕç тума вĕрентесрен анҫах пăртак сыхланмалла. Кашни вĕрентекен хăй майлă вĕрентме ирĕклĕ, пĕр-пĕр усал йапала çинҫен вĕрентсен, сут умĕнҫе хăй ĕçĕсемшĕн хăй çийеле тухтăр, сăмах патăр. Патшалăх хăй укçипе тытса тăракан школасенҫе, патшалăхăн вăл школасенҫи вĕрентекенсенĕн свидѣтельствосем пурри-çуккине анҫах пĕлсе тăмалла. Пуринҫен ытла, аслă школасенҫе вĕрентме ирĕклĕ пултăр.

Сăмах калама ирĕклĕ çын пĕр-пĕр пухусенҫе те сăмахсем калама хăй шухăшĕсене, пĕр-пĕр йапала çинҫен йепле шухăшланисене каласа пĕлтерме ирĕк пултăр, çав ирĕк усăллă пултăр тесен, çынсене пĕр-пĕр ĕç çинҫен канашлама ушкăнăн-ушкăнăн пуçтарăнма (пĕрле пуçтарăнса общество тума) ирĕк пулмалла пултăр.

Ушкăнăн-ушкăнăн пуçтарăнма, пуху пуçтарма халăха ирĕк пулмалла. Пур аван патшалăхсенҫе те халăхăн çавăн пек ирĕк пур. Ҫăнах, пухусем пуçтарма ирĕк пани вăл пит кирлĕ, мĕншĕн тесен хăш-хăш йывăр ĕçсене пĕҫҫен тума вăй та ситеймест, ушкăн вăл ĕçе çăмăл тума пултарать. Анҫах кунта та вăл ирĕк йаланах пулма пултараймасть.

Пухусенҫе усăллă ĕç анҫах мар, усал, законсем тăрăх тума йураман айăплă ĕçсем те тума пултараççĕ. Пухусенҫе йепле патшалăх йĕркисене улăштарасси çинҫен, йепле патшана пĕтересси çинҫеп те канашлама пултараççĕ; çавăн пек пухусене нихăш патшалăх та тӳсме пултарайманасть. Çавăнпа пур çĕрте те законсем çавăн пек усал шухăшсемпе пуху пуçтарма ҫараççĕ. Хăш ҫухне тата пухусенҫе патшалăх йĕркисене улăштарасшăн мар, хăш-хăш çынсене усал тăвасси, пĕтересси

çинҫен канашлама пултараççĕ, çавăнпа çавăн пек пухусенҫен те патшалăхăн сыхланма кирлĕ. Епĕ кунта çавăн пек пухусене пуçтарăнма ҫармалла марри çинҫен каламастăп, усăллă ĕççем тума пуçтарăнма ҫару ан пултăр тетĕп.

Йут патшалăхсенҫи законсем тăрăх пур законсем тума хушман ĕççем çинҫен канашлама анҫах пуçтарăнма йурамасť. Пухусем тулта та, пӳртре те тума йураť. Пуху пуçтарас тесен никамран та ирĕк ыйтма кирлĕ мар; пуху пуçтарас тийекенсенĕн, анҫах пуху пуçтариҫҫен пĕр кун малтан полицейское управленіе кайса çапла çапла çавăн ҫухне, çав вырăнта, çав ĕç çинҫен канашлама пуçтаратпăр тесе каламалла, урăх нимĕн те кирлĕ мар. Анҫах хăш-хăш патшалăхсенҫе ун пекех мар: Германія паťшалăхĕсенҫе пухăва тулта пуçтарас тесен, малтан пуçтарма ирĕк ыйтас пулаť. Пуху йĕрки ак çапла: кашни пухура пĕр правительствоган лартнă çын (полицейскій чиновник) пулмалла; вăл çын пуху закон тума хушман ĕç çинҫен канашлама тытăна пуçласанах, пухăва салатма пултараť, -йе пухура пăлхав мĕн пула пуçласан та пухăва салатма пултараť.

*Обществосен ирĕкĕ* çавăн пекех хăш ҫухне хĕсĕкленме пултараť. Общество йаланах пĕр-пĕр хăйне усăллă, никама ӳсал кӳмен ĕç çинҫен канашлама пуçтăранаť пулсан, вăл йаланах пуçтарăнма пултараť, ăна никам та ҫарма пултараймасť. Обществосем патшалăх йĕрки ĕçĕ çинҫен, кил ĕçĕ çинҫен, вĕренмелли çинҫен тата ытти йапаласем çинҫен канашлама пултараççĕ. Обществосен, пухусем пекех, законсем тăрăх тума йураман ĕççем çинҫен канашлама йурамасť. Патшалăх обществосем хыççăн та вĕсем йураллă-йураллă мар ĕç тунине пĕлме сыхласа пыраť.

Обществосен вăрттăн пуçтарăнма йурамаст. Ун пек вăрттăн пуçтарăнакан обществосене нихăш патшалăх та тӳсмест, çавăнпа вăрттăн общество пуррине пěлсенех ăна сута параççě. Германіяра начальниксене пăхăнса пурăнмалла обществосем, тата патшалăх ěçне йепле майпа та пулсан кансěрлеме шухăшлакан обществосем пулма пултараймаççě. Франціяра закон тăрăх тума йураман ěççене тума шухăшлакан обществосем, тата республика йěркисене пăсма, йе патшалăх çěрне усал кӳме шухăшлакан обществосем пулма пултараймаççě. Англіяра хунă йěркесене вăйпа пăсма тăрăшакан, тата ытти усал шухăшлă обществосем пулма пултараймаççě. Ытти обществосем пулма пултараймаççě. Ытти обществосем, закон тăрăх, пурте пулма пултараççě. Общество тăвас тесен хăш ђух ирěк илме кирлě, хăш ђух тата нимěн те кирлě мар. Франціяра обществона хăй ěçне тума пысăк ирěк кирлě мар пулсан, вăл ирěк илмесěр те пуçтарăнма пултарать; тата общество, кашни мěн ђухлě ирěклě, çавăн пекех ирěклě пулас тесен, унăн ирěк илмелле, начальство аллине общество йатне, вăл ăçта пуçтарăннине, мěнле ěç тума шухăшланине, обществора миçе çын, вěсен йађěсене пурне те хут çине çырса памалла. Пуриншěн те усăллă ěç тума шухăшлакан обществон та малтан ирěк илмелле. Германіяра пур закон тăрăх пуçтарăнма йуракан обществосен те хăйсен пуçланни çинђен начальствона анђах пěлтермелле, пěр патшалăх йěркисем çинђен канашлас тийекен обществосен анђах апла мар; вăл обществосен ирěк те ытти обществосенěнђен нумай хěсěк. Çапла, патшалăх йěркисем çинђен канашлас тийекен обществосенђе хěр-арăмсем, çамрăк çынсем, вăрçă ěçěпе пурăнакан çынсем пулма пултараймаççě; вăл обществосен полиціяна ăçта, хăш вă-

хӑтра пуҫтаранассине пӗлтерсе тӑмалла, обществори ҫынсен йаҫӗсене хут ҫине ҫырса памалла. Вӑл общество ӗҫе закона урлӑ тума тытӑна пуҫласан, полиція обществона ӗҫе тума вӑхӑтлӑха ҫарса тӑратма пултарайҭ. Ытти обществосен ирӗкне пӗринне те ҫавӑн пек хӗсӗклетмен. Вӑл обществосенҫе полиція ӗҫе закон майлӑ, йе закона урлӑ туни хыҫҫӑн анҫах пӑхса пыма ирӗклӗ. Англіяра ӗҫе закона хирӗҫ тума хӑтланакан обществосенҫен пуҫне ыттисем пурте ирӗклӗ. Йут патшалӑхсенҫе тата ҫак ирӗксенҫен пуҫне халӑх правительстворан хӑй нушисене ҫӑмӑллатма ыйтма, ҫӗнӗрен кирлӗ законсем кӑларма ыйтма пултарайҭ.

Халӑх ирӗклӗ пурӑнтӑр тесен пӗр пӗрне пусмӑрламалла марри, сӑмах калама, пуху пуҫтарма общество тума, пӗр ҫӗртен тепӗр вырӑна куҫса ҫӳреме ирӗк кирлӗ пулсан, *кашнине харпӑр хӑй кӑмӑлне килнӗ тӗнпе (религіяпа) пурӑнма ирӗк пани* тата питрех кирлӗ. Кашни ҫынна харпӑр хӑй тӗрлӗ ӗненме, хӑй майлӑ кӗл-тума никам та кансӗрлемелле мар пулмалла. Кашни ҫынна хӑйне кӑмӑла кайнӑ тӗнпе (религіяпа) пурӑнма, хӑй мӗнле ӗненнине ытти ҫынсене вӗрентме, вӑл вӗрентни закона урлӑ мар пулсан, никам та кансӗрлемелле мар пулмалла. Никам та вӑл хӑй майлӑ ӗненсе пурӑннӑшӑн, хӑй майлӑ вӗрентнӗшӗн хӗстермелле мар пулмалла. Ҫавӑнпа халӗ йут патшалӑхсенҫе законсем тӑрӑх никама та харпӑр хӑй йуратнӑ тӗнпе пурӑнма ҫармалла мар тунӑ, мӗншӗн тесен хӑвӑрах шухӑшлӑр-ха: ҫын хӑй майлӑ ӗненет пулсан, ӑна вӑйпа йеплe урӑх майлӑ ӗненмелле тӑвас тетӗр? Йут патшалӑхсенҫе хӑш ҫух религіяшӑн хӗсӗрлемелле пулсан та, мӗнле ӗненнишӗн мар, обрядшӗн (вӑл обряд закон майлӑ мар

пулсан) анҫах хӗсӗрлеҫҫӗ. Патшалӑх хӑш религіясемпе пурӑнма ҫарма мар, кашни религіяна, ӑна ытти религіясемпе пурӑнакансем ан пусмӑрлаҫҫӑр тесе хытӑ сыхласа тӑрать.

Халӑх ирӗклӗ пурӑнтӑр тесен, кашни ҫын *хӑйне кӑмӑла кайакан ӗҫе ӗҫлеме ирӗклӗ пултӑр*. Кашни ҫын закон ҫарман ӗҫсенҫен хӑйне кирлӗ, вӑй ҫеммӗн ӗҫе суйласа илме ирӗклӗ Западная Европари, Америкари патшалӑхсенҫен пӗринҫе те законсем тӑрӑх никама та, пуйаннине те ҫухӑннине те, аслине те, кӗҫӗннине те хӑйне кирлӗ ӗҫе ӗҫлесе пурӑнма ҫару ҫук. Халиҫен хӗр-арӑмсене пур ӗҫе те ӗҫлесе пурӑнма ирӗклех марҫӗ, халӗ вӑл йӑла та майӗпе пӗтсе пыра пуҫларӗ. Америкара майӗпе хӗр-арӑмсем тӗрлӗ патшалӑх ӗҫӗсене туса тӑра пуҫлаҫҫӗ. Пур ҫӗрте те хӑш-хӑш ӗҫсене пурне те тума ирӗк ҫук пулсан та, вӑл ӗҫ мӗнлинҫен килет. Нумай ӗҫсенҫе пит нумай пӗлме кирлӗ, ҫавӑнпа вӑл ӗҫсене ӗҫлес пулсан пит нумай вӗренес пулать, пысӑк школасенҫе вӗренсе тухса свидѣтельствосем илес пулать. Сурана, ҫире тӳрлетес тесен доктор ӗҫне вӗренес пулать, судья пулас тесен законсем пӗлес пулать. Кам тӗрлӗ ӗҫе ӗҫлес тет, унӑн вӑл ӗҫсем ҫинҫен вӗренес пулать, кам мӗне вӗренес тет ҫавна вӗренме ирӗк пултӑр.

Пур ирӗклӗ патшалӑхра та закон пӗр-пӗрне пусмӑрлама анҫах мар, *пӗр-пӗрин пурлӑхне, ҫуртне тивме те ҫарать*. Англичан ҫынни: «манӑн ҫурт-вӑл манӑн крѣпость пулать», тет; вӑл ун ҫуртне никам та хуҫи ирӗк памасӑр кӗме пултараймассине пӗлтерет. Англичанин ҫынни ҫуртне хӑй ирӗк памасӑр ахаль ҫын анҫах мар, чиновник тавраш те, полиція та кӗме пултараймасть. Сайра хутра анҫах: айӑп тума хатӗрленнӗ

çынна айăп тума кансĕрлемелле ӡух, йе айăп тунă çыннăн ĕçне лайăхрах пĕлмелле ӡух, йе çурта ухтармалла ӡух анӡах полиція çын çуртне, хуçа ирĕк памасăрах кĕме пултарать, ăна та тӳрех хăй тĕллĕн мар, сутра хунă хыççăн анӡах. Çынăн пур тĕрлĕ пурлăхне те никам та вăйпа тивмелле мар, вăл пурлăхсене тивесрен патшалăх хăй сыхласа тăрать. Сайра хутра анӡах, пурне те усăллă пулмалла çĕрте, çынăн пурлăхне туртса илмелле пулать, вăл тĕлĕшре те законсем хунă йĕркесенӡен тухмасăр хăтланас пулать. Тата хăш ӡух хыснана налог укçи тӳлемен çын пурлăхне сутпа туртса илмелле пулать.

Çак пĕтĕм калана ирĕксем тăрăх, халăх законсем кăларнă çĕрте патшалăх ĕçĕсенӡе, сут ĕçĕсенӡе пулма пултарать. Çак ĕçсенӡе, *пĕр-пĕр патшалăх ĕçне туса тăракан çынна сута пама пултарасси*, сут нихăш начальнике те пăхăнса тăманни пит паха пулмалла. Хăш-хăш патшалăхсенӡе аслă чиновниксен министрсен халăх вĕсене шанми пулсан вĕсен вырăнтан тухмалла; вĕсем вырăнта ĕçленĕ ӡухне пĕр-пĕр айăп тусан, вĕсене законсем кăларакан пухура аслă сутпа сут тăваççĕ: ахаль ӡухне пĕр-пĕр айăп тусан-ахаль сутсенӡе сут тăваççĕ. Çавăн пек йĕркесене епир Англіяра, Франціяра куратпăр. Анӡах нумай патшалăхсенӡе министрсене, аслă чинновниксене патшалăх ĕçĕнӡе айăп тунăшăн законсем кăларакан çĕрте аслă сутпа сут тумаççĕ, ахаль сутсенӡе анӡах сут тăваççĕ; çапах та, халăхран суйланă представительсен министрсене айăпшăн сута пама ирĕк пур.

Халăх ирĕкне хĕсĕрлеме парас маррине, пур çынсене те, пуринӡен ытла полицейскійсене, патшалăх ĕçĕнӡе тăракан çынсене закон урлă тунă ĕçсемпĕн сута

памалла туни нумай сыхласа тӑраҫ. Халӑх хушшинҫен кам ҫынна вӑйпа пусмӑрласа, йе ҫын пурлӑхне туртса илсе, йе урӑх законсем тӑрӑх тума йураманнисене пӑхмасӑр усал ӗҫ тӑваҫ, вӑл сут умӗнҫе айӑплӑ пулаҫ. Ун вырӑнне халӑх хӑй те патшалӑх ӗҫӗсенҫе тӑракан ҫынсем, полицейскійсем халӑха ирӗк паракан законсене хирӗҫ ӗҫ тунине курсан, вӗсене сута пама пултараҫ. Ҫак йӗркесем пур патшалӑхсенҫе те пӗр пекрехех: Англіяра Америкара ҫавӑн пек айӑпланнӑ чиновник-таврашсене ахаҫ ҫынсене сут тӑвакан сутсенҫех сут тӑваҫҫӗ, Франціяра ун пеккисем валли ӑрасна сут тунӑ; Германіяра калех ӑрасна сутра сут тӑваҫҫӗ. Халӑх айӑп тунӑ чиновниксене нихӑш начальстворан ирӗк илмесӗрех сута пама пултараҫ. Ку тӗлӗшрен Англія патшалӑхӗнҫи йӗркесем пуринҫен авантарах пулмалла. Сутран пуҫне тата Англіяра чиновниксене халӑха ирӗк паракан законсене хирӗҫ тунӑ ӗҫсемшӗн пит пысӑк штраф тӳлеттерме пултараҫҫӗ. Тата Англіяри сутсем нихӑш начальствона та пӑхӑнса тӑмаҫҫӗ; ҫавӑн пек сут никама пӑхӑнман ҫӗрте, тата сут тӑвакансем халӑх хушшинҫен суйланӑ ҫынсем пулсан анҫах тӗрӗс сут тума пулаҫ, ҫын ирӗкне кам та пулсан хӗсӗрлесрен лайӑх сыхласа тӑма пулаҫ. Халӑха ирӗк паракан законсем тата пит аван сыхӑ тӑҫҫӑр тесен, чиновниксем нумай вӗреннӗ, законсене хисеплеме тӑрӑшакан ҫынсем пулмалла. Ӑҫта аплах тума пулаймасҫ, унта, аван сутран пуҫне, полиціяна пӑре так вӗреннӗ ҫынсене анҫах кӳртмелле тумалла, вӗсеншалу ҫителӗхлӗ хумалла.

1905-мӗш ҫулта, октябрӗн 17-мӗш кунӗнҫе тухнӑ манифест пирӗн Россіяри халӑха та, Западная Европари патшалӑхсенҫи пек пысӑк ирӗк паҫӗ. Октябрӗн 17-мӗш кунӗнҫе

тухнă манифест Патшалăх Пуххине кайма пĕтĕм халăх хушшинҫен представительсем суйлама ирĕк паҫĕ; хресҫенсем, ҫĕр тытакан суту-илӳ тăвакансем, хапрăксенҫе, савăтсенҫе ĕҫлекенсем, тата урăх тĕрлĕ ĕҫпе пурăнакансем пурте, ҫав манифест тăрăх, Патшалăх Пуххине хăйсен хушшинҫен ҫынсем суйласа йама пултараҫҫĕ Октябрĕн 17-мĕш кунĕнҫе тухнă манифест тăрăх пурте: пуйанни те, ҫухăнни те, вĕсене халăх суйланă пулсан, Патшалăх Пуххине кайма пултараҫҫĕ. Октябрĕн 17-мĕш кунĕ тухнă манифест пĕтĕм халăх хушшинҫен представительсем суйлама ирĕк парать. Вăл манифест тăрăх Патшалăх Пуххи законсем кăларас ирĕке хăй аллине илет, малалла ĕнтĕ Патшалăх Пуххи ирĕкĕсĕр, Патша ирĕкĕсĕр пекех, пĕр закон та кăларма пултараймĕҫ. Ҫапла ĕнтĕ, ҫĕнĕрен закон кăларас тесен, йе кивĕ закона пĕтерес, йе улăштарас тесен, Патшалăх Пуххи ирĕкĕпе Патша ирĕкĕ кирлĕ. Ҫуллен патшалăх укҫа ăҫтан-ăҫтан пуҫтарса, ăҫта-ăҫта йарса пĕтересси ҫинҫен хут ҫырасси, мĕнле тавар ҫине мĕн ҫухлĕ налог хурасси, пĕр-пĕр ҫын пурлăхне хыснана пуҫтарса илесси, йе патшалăх пурлăхне вăхăтлăх пĕр-пĕр ҫын аллине парасси, тата ытти ĕҫсене тăвасси малашне татах патшапа Патшалăх Пуххи ирĕкĕсенҫен килĕҫ.

Октябрĕн 17-мĕш кун тухнă манифест ҫĕнĕрен йĕрке хурать: вăл йĕрке тăрăх Патшалăх Пуххин пур патшалăх ĕҫĕсене туса тăракансен-министрсенҫен пуҫласа пĕҫĕк чиновниксем патне ҫитиҫҫенех пурин хыҫҫăн та ĕҫсене тĕрĕс-тĕрĕс мар тунисене астуса пымалла. Министрсем, ытти чиновниксем пур закон тума хушман ĕҫшĕн те сут умĕнҫе айăплă пулмалла. Вăл сут йĕрки мĕнле пуласси ҫинҫен ҫĕнĕрен закон кăлармалла. Октябрĕн 17-мĕш кунĕ тухнă манифет халăха пур тĕрлĕ ирĕк

параĭ: никама та никам пусмăрламалла мар закон параĭ, тĕрлĕ религіяпа пурăнма, сăмах калама, кĕнекесем пусма, пухусем пуçтарма, обществосем тума ирĕк параĭ. Октябрĕн 17-мĕш кунĕ тухнă манифест пирĕн Россіяра пĕтĕм законсенĕн пуçлăхĕ, законсенĕн законĕ; вăл закон тăрăх-никам та никама пусмăрламалла мар, халăх ирĕкне никам та хĕстермелле мар. Халĕ пирĕн патшалăхри законсене улăштарайман, тĕрлетеймен пулсан та, вĕсене Свод Законов çинҫе каланă пек тăнламалла мар, октябрĕн 17-мĕш кун тухнă манифест çинҫи пек тăнламалла. Çавăнпа ĕнтĕ халĕ правительство çыннинҫен хăшĕ те пулсан, йе пĕр пĕр полицейскій хăй тĕллĕн анҫах кама та пулсан тытса тĕрмене хупса сут умне тахçанҫен тăратмасăр тăрсан, йе кама та пулсан кайас тенĕ çĕре кайма ҫарсан, йе киле тавăрăнма ҫарсан, йе пĕр-пĕр закон тума хушман ĕçе вăйпа тутарттарсан, йе хăй тĕллĕн кам çуртне те пулсан кĕрсе ухтарсан, йе ырă шухăшлă çынсене пуху пухма ҫарсан, йе законсем ҫарман ĕçсене тума общество тума ҫарсан, йе кама та пулсан кĕнеке пусма ҫарсан, йе религіяшăн кама та пулсан хĕсĕрлесен-вăл полицейскій халăха ирĕк паракан закона хирĕç пыраĭ, Патшаран октябрĕн 17-мĕш кунĕ тухнă манифеста хирĕç пыраĭ.

Çавăнпа çакăн пек закона хирĕç тăвакан полицейскій, йе чиновник, хăй тунă ĕçĕшĕн сут умĕнҫе айăплă. Октябрĕн 17-мĕш кунĕ тухнă манифест никамăн та никама пусмăрлама йурамасĭ тет. Вăл манифест тăрăх полиція та, салтаксем те халăх вĕсене хирĕç тăмасĭ пулсан, пăшалсемпе пеме, хĕçсемпе ĕçлеме ирĕклĕ мар. Пăлхава лăплантарнă çĕрте полиціянăн пĕр хунă йĕркесенҫен тухмалла мар, вăйпа хирĕç тăракансем çине анҫах пăшалсемпе пеме йураĭ.

Халăх хушшинҫе ҫапăҫу-мĕн тухнă ҫĕрте полиціянăн, йе салтаксенĕн пĕринсем майлă пулса тепĕрисене хирĕҫ тăмалла мар, йепле те пулсан вĕсене сахал айăп кўме тăрăшса килĕштерме, лăплантарма тăрăшас пулаť. Полицейскійсенҫен, салтаксенҫен кам ҫаксене тумасť, кам пĕр айăпсăр ҫынсенех пусмăрласа усал тăваť, кам закон хунă йĕркесем тăрăх хăтланмасť, вăл октябрĕн 17-мĕш кунĕ тухнă манифеста хирĕҫ пыраť, ҫавăнпа сут умĕнҫе айăплă.

Халăхăн хăйĕн те йалҫенҫе, ҫиркўлĕ йалсенҫе, хуласенҫе пурăнакансенĕн ирĕк паракан закона хирĕҫ ĕҫ тăвасран, пĕр-пĕрне пусмăрласа пĕр-пĕрин ирĕкне пĕтересрен сыхланса пурăнмалла. Халăх хăй ҫавăн пек пурăнсан анҫах, ăна ирĕк парса ун ирĕкне сыхлакан закон та тĕреклĕ тăрĕ.